# АЧАМĂРСЕМ

**Виçĕ пайлă пьеса**

ПЬЕСĂРИ ÇЫНСЕМ:

А н д р е й — 14-ри ача. Питĕ шухăшласа калаçать. Ашшĕ çук пирки хăйне кил хуçи пек тытать.

Н и н а - унăн йăмăкĕ, 12-ре.

Х а р и т о н — Нина шăллĕ, 8-та.

К у з ь м а П е т р о в и ч — колхоз председателĕ, 60-та, вĕсен кӳрши.

А н а с т а с и я З а х а р о в н а — унăн карчăкĕ, 55-ре, вăр-варскер.

И р а — колхоз счетовочĕ, 17-ре.

Ç и т ă р мучи- ватă колхозник, завхоз, хăлхи хытăрах.

К ĕ р к у р и - çыру салатакан, 14-ра, питĕ çивĕч, калаçма юратакан ача.

М и ш а — Андрей тусĕ, 16-ра, пысăк ача, вырăс, эвакуаципе яла килнĕскер.

Хĕрсем, шкулта вĕренекен арçын ачасемпе хĕрачасем.

Пьесăри ĕç Тăван çĕршыв аслă вăрçи вăхăтĕнче 1942-1943 çулсенче пулса иртет.

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Шатрун çуртăн пĕр пӳрчĕ. Икĕ алăк, кăмака. Чӳречисене витĕнкĕçсемпе, тӳшек çиттисемпе карнă. Сĕтел тĕлĕнче лампа сунать. Харитон кăмака умĕнче ларать.

Х а р и т о н *(букварьне хурса).* Автан тус...

Автан тус, автан тус!

Хĕрлĕ çĕлĕк...

Чарăнса кĕнеке çине пăхса илет, унтан каллех пăхмасăр.

Хĕрлĕ çĕлĕк, çуллă пуç,

Мĕншĕн ытла ир тăратăн?

Мĕншĕн, мĕншĕн...

Татах кĕнеки çине пăхать.

Мĕншĕн хытă кăшкăратăн?

Мана ирех вăрататăн?

Çав сăмахсене пăхмасăр тепĕр хут вулама тытăнать. Çутă витре йатса Нина кĕрет.

Н и н а . Мĕнле "автан тус", яшка пиçет-и?

Х а р и т о н . Пиçет, аппа. *(Шăппăн çав сăввах вулама тытăнать.)*

Н и н а . Сухан ятăн-и?

Х а р и т о н . Маннă, аппа. Эпĕ халех. (*Вучах патĕнчен каять те кĕнекине сĕтел çине хурса сухан татма пукан çине хăпарма тытăнать.)*

Н и н а . Лар ĕнтĕ, хамах ярăп.

Харитон сĕтел хушшине ларать. Нина сухан татса илет те турама пуçлать.

Х а р и т о н *(кĕнеке çине пăхса)*. Ку мĕнле саспалли, аппа? *(Кĕнекине Нинăна кăтартать.)*

Н и н а *(пăхса)*. "Й".

Х а р и т о н *(вуласа)*. "Ай-йы-йă".

Н и н а . ""Айыпă" мар, "йыпă". "Ай" мар, "И"

Х а р и т о н . "И", "и", "и"...

Н и н а *(пўлсе)*. Сире "и" саспаллипе те паллаштарчĕç-и?

Х а р и т о н . Çук, "ăйă" ыран кăтартать учительница, паян "Автан туса" пăхмасăр вулама вĕренĕр теççĕ.

Н и н а . Апла пулсан мĕн "ăйлатса" ларатăн? Вĕрен "Автан тусна". *(Куçне шăлса.)* Ой, хаяр сухан! *(Суханне ывăспа хурана ярать.)*

Х а р и т о н *(кĕнеке çине пăхмасăр, хăвăрт)*. Автан тус, автан тус...

А н а с т а с и я З а х а р о в н а кĕрет.

А н а с т а с и я З а х . Вучах умĕнче кăштăртатса тĕттĕм пулнине те сисмен. Нина, сĕт витрине пар-ха, ĕне суса кĕрем.

Н и н а . Халĕ çеç суса кĕтĕм, Наçтук аки.

А н а с т а с и я  З а х . Хăвах сурăн-и?

Н и н а . Ĕни пирĕн йăваш та, сума пулать.

А н а с т а с и я  З а х . Яшки пиçрĕ-и?

Н и н а . Пиçеймен-ха.

А н а с т а с и я  Зах. Э, кăвайти те пĕтнĕ пулас сирĕн?

Х а р и т о н . Халех йăтса кĕретĕп, Наçтук аки. *(Кайма тытăнать.)*

А н а с т а с и я  З а х . Эс кĕнекӳне вула, ачам, хам илсе кĕрĕп. *(Хăвăрт каять.)*

Нина сумкăран кĕнеке илсе сĕтел хушшине ларать.

Х а р и т о н *(хăй вырăнне ларса кĕнеке вулама пуçлать).* "Автан хура ураллă, хĕрлĕ çĕлĕклĕ"... *(Вулама чарăнса Нина çине пахать.)* Аппа, мĕншĕн пирĕн Наçтук аки пек асанне çук?

Н и н а *(вулама чарăнса).* Пурччĕ те, вилчĕ-çке.

Х а р и т о н . Наçтук аки пекех кăмăллăччĕ-и?

Н и н а . Питĕ ырă карчăкчĕ. Пĕрмай юмах ярса паратчĕ. Çулла кукамайсем патне хăнана каяттăмăр. Ирхине килтен тухаттăмăр та хĕвел аннă çĕре аран çитеттĕмĕр.

Х а р и т о н . Кун хута каяттăр-и? Кукамайсен колхозе инçе мар-çке.

Н и н а . Питĕ ватăччĕ асанне. Çур километр утаттăмăр та канма лараттăмăр. Ларнă çĕртех тĕлĕрсе илетчĕ вара хай.

А н а с т а с и я  З а х а р о в н а кăвайтă йăтса кĕрет.

А н а с т а с и я  Зах. Юр çăва пуçларĕ.

Х а р и т о н . Пит аван, ыран çунашкапа ярăнатпăр.

А н а с т а с и я  Зах. Ярăнасси аякра-ха, тепĕр уйăхран мĕн пулĕ. Андрей ăçта сирĕн? Халĕ те шкултан таврăнман-и?

Н и н а . Вĕсен паян пуху.

А н а с т а с и я  Зах. Э, çапла-çке, комсомолецсен пуху пулмалла терĕç. Миша та шкултан таврăнсан кăшт çырткаларĕ те вулав çуртне чупрĕ. Ну, эп каям-ха

эппин, Андрей таврӑнсан хӑвӑрах яшкине антарса ҫийӗр вара. Ҫӑкӑр пур-и?

Н и н а . Пур, Наҫтук аки...

А н а с т а с и я Зах. *(кайма тӑрать те чарӑнать.)* Эх, калама маннӑ... Кузьма пиччӳпе Ира болницӑна кайрӗҫ.

Н и н а . Анне патне-и?

А н а с т а с и я Зах. Анну патне ҫав. Телефонпа пьма хушрӗҫ тет.

Х а р и т о н . Аннене илсе килеҫҫӗ пулӗ ёнтӗ.

А н а с т а с и я Зах. Сывалнӑ пулсан илсе килӗччӗҫ те... йывӑр чирпе чирлерӗ-ҫке аннӳ, йывӑр чирпе...

Х а р и т о н *(сӗтел хушшинчен тухса, ташласа).* Анне килет! Анне килет!

Автан тус, автан тус!

Хӗрлӗ ҫӗлӗк, ҫуллӑ пуҫ!

Мӗншӗн ытла ир тӑратӑн?

Мӗншӗн хытӑ кӑшкӑратӑн?

Мӗншӗн... мӗншӗн...

Н и н а . Мана ирех вӑрататӑн?

Х а р и т о н . Вӑрат, вӑрат, хӑвӑртрах!

Анне килет паянах!

Н и н а . Чим, эсӗ ху сӑвӑ ҫырма пуҫланӑ мар-и?

Чӳречерен шаккаҫҫӗ. Йытӑ вӗрни илтӗнет.

К ӗ р к у р и *(сцена хыҫӗнче).* Килте-и?

Н и н а . Кам унта?

А н а с т а с и я Зах. Кам пултӑр? Кӗркури. Ҫавӑ каҫ пулсан ҫыру валеҫсе ҫӳрет. Шкултан тӳрех почтӑна ҫырусем илме вӗҫтерет вара.

К ӗ р к у р и *(сцена хыҫӗнче).* Мӗн эсир хӗвел аннӑ-анманах ҫывӑрма выртнӑ-и?

Н и н а . Ҫывӑрман, кӗр.

К ӗ р к у р и *(сцена хыҫӗнче).* Улайкка! Шӑп! Мӗн эс. Мана паллайми пулнӑ-и? *(Йытӑ вӗрме чарӑнать.)*

А н а с т а с и я  Зах. Кĕркурие те хĕрхенес килет: шкула та çӳрет, çырусем те салатать.

К ĕ р к у р и *(пиншак çинчи юра силлесе кĕрет).* Виçĕ хут ӳкрĕм кĕçĕр.

А н а с т а с и я  Зах. Ерипентерех çӳрес пулать, ачам.

К ĕ р к у р и . Атă тĕпĕ якалнă та, ура ярса пусма çук шăвать... Наçтук аки, сире хаçат.

А н а с т а с и я  Зах. Тавтапуç, Кĕркури. *(Хаçата уçкаласа пăхать.)* Чим, ку сирĕн аннӳ мар-и вара?

К ĕ р к у р и . Тĕрĕс, Анна аппа сăнĕ. Вăрман каснă çĕрте стахановла ĕçленĕшĕн унăн сăнне хаçата кĕртнĕ. *(Хаçата пӳрнипе тĕксе.)* Ак статья та çырнă пирĕн колхозниксем çинчен... "Ялав" колхозăн бригади чи мала тухнă тенĕ.

Пурте хаçат çине пахаççĕ.

Х а р и т о н . Чăнах та анне!

Н и н а . Вăрмантах ӳкернĕ иккен...

А н а с т а с и я  Зах. Вăрман каснă чух сивĕпе шанса пăсăлчĕ те ĕнтĕ аннӳ. Çанталăкĕ йĕркеллĕ пулмарĕ-çке: кунĕн-çĕрĕн çумăр, сивĕ пулчĕ. Миçе хут больницăна кай терĕмĕр. Итлемерĕ вĕт, иртсе каять тетчĕ. Урараи ӳкиччен вăрманта ĕçлерĕ те...

Х а р и т о н . Наçтук аки, ку хаçата пире памăн-ши? Анне сăнне стена çине çапса хурас килет.

А н а с т а с и я  Зах. Илех, ачам, илех. Кузьма пиччӳ правленинче вулĕ. Ну, эп каям-ха ĕнтĕ. Миша та таврăнать пулĕ. Апат çитерес пулать. *(Каять.)*

Н и н а . Пире çыру пур-и, Кĕркури?

Кĕркури.  Çук, Нина.

Н и н а  *(ассăн сывласа).* Эх, атте...

К ĕ р к у р и . Эс ан хурлан-ха. Фронтри ĕçсем çинчен илтнĕ пулĕ? Çыру çырма, тен, ерçмеççĕ. Ăçта çапăçатчĕ-ха Клементи пичче?

Н и н а . Ун çинчен çырма юрамасть-çке. Анчах пĕр çырура Атăла асăннăччĕ.

К ĕ р к у р и . Апла пулсан Атăл патĕнче фашистсене хĕртет пулĕ.

Н и н а . Анне те çавăнта пулĕ тет.

К ĕ р к у р и *(хутаççинчен "Известия" хаçат кăларăть.)* Сирĕн заем облигацийĕсем пур пулĕ?

Н и н а . Пур-çке.

К ĕ р к у р и . Атьăр тĕрĕслесе пăхар. Эпир аннепе хамăрăннисене тĕрĕслерĕмĕр. Пире тухман.

Н и н а . Облигацисем анне арчинче.

К ĕ р к у р и . Шел.

Х а р и т о н . Чим, пичче облигаци номерĕсене уйрăм хут çине çырса илнĕччĕ. *(Стена çинче çакăнса тăракан кĕнеке хутаççине илет те кĕнекисене сĕтел çине хурса хутлатнă çур листа хут тупать.)*... Акă вăл. *(Кĕркурие парать.)*

К ĕ р к у р и *(хаçатне сĕтел çине хурса)*. Халĕ тĕрĕслĕпĕр.

Х а р и т о н . Аппа, пирĕн облигаци пин тенкĕ выляса илсен? Мĕн чухлĕ укçа пулать вара?

К ĕ р к у р и *(тĕрĕслесе).* Ку çук... Çĕр çирĕм пинте улт çĕр сакăр вун пиллĕк... Чимĕр, чимĕр, юлташсем... *(Пуçне çĕклесе.)* Харитон, кăшкăр "ура!" *(Харитон çăварне карса пăрахать.)* Мĕн çăварна карса тăратăн? Кăшкăр!

Х а р и т о н *(шăппăн).* Ура...

К ĕ р к у р и . Кунашкал çĕр тенкĕ выляса илсен кăшкăраççĕ. Эсир ик çĕр аллă хут ытла выляса илнĕ.

Х а р и т о н . Мĕн чухлĕ пулать вăл?

К ĕ р к у р и . Шутла: çĕре ик çĕр аллă хут ӳстерсен миçе ункăллă цифра пулать?

Х а р и т о н . Аппа... *(Аппăшĕçине пахать.)*

Нина. Çирĕм пилĕк пин-и, Кĕркури?

К ĕ р к у р и . Аха!

Х а р и т о н . Çирĕм пилĕк пин нумай-и вăл?

К ĕ р к у р и . Пĕр купа укçа. Ну, мĕн илес тетĕн ĕнтĕ, Харитон тусăм?

Х а р и т о н . Эпĕ-и? ... Эпĕ чи малтан виçĕ урапаллă велосипед илетĕп. Атте те илсе парасшăнччĕ мана.

К ĕ р к у р и . Мĕншĕн виçĕ урапаллине? Иккĕлли авантăрах.

Х а р и т о н . Иккĕлли çинчен чикеленсе кайма пулать.

К ĕ р к у р и . Çăварне карса çӳрекен çуран пынă чух та чикеленет. Иккĕллине ил. Халĕ сан пеккисем валли пĕчĕк велосипед кăлараççĕ. Станцинче пĕр ача çӳренине куртăм. Хăй санран та пĕчĕкçĕ. Çерем çинче ярăнса çӳрет çав.

Х а р и т о н . Ӳкмест-и?

К ĕ р к у р и . Ăçта ӳкме!.. Шăнкăравĕ те пур... Мана тĕл пулчĕ те чăнкăр! тутарчĕ.

Х а р и т о н . Юрать, иккĕллине илетĕп. Анчах эс ярăнма вĕрент вара мана.

Н и н а . Кĕркури хăй те ярăнма пĕлмест.

К ĕ р к у р и . Эпĕ-и? Часах вĕренетĕп. Ну, тата мĕн илес тетĕн, Харитон Клементьевич?

Х а р и т о н . Самолет илетĕп.

К ĕ р к у р и . Мĕнле самолет?

Х а р и т о н . Хăй тĕллĕн вĕçекеннине... Пӳрт тăррине хăпарса каятăп та яра паратăп... Урам урлах вĕçсе каять. Унтан хут купăс илес... Леш, колхоз театрĕн музыканчĕн пеккине.

К ĕ р к у р и . Баян илес тетĕн эппин? Ырлатăп. Иксĕмĕр калăпăр. Юрать-и?

Х а р и т о н . Юрать. Тата... патефон, радио... ял Советри пеккине... унтан икĕ çĕçĕллĕ, пăраллă пекĕ...

К ĕ р к у р и . Çитет. Капла эс пиччӳпе аппу валли нимĕн те хăвармарăн. Сана сакăр пин те виççĕр вăтăр виçĕ тенкĕ те вăтăр виçĕ пус çеç тивет. Эсĕ, Нина, мĕн илме шутлатăн?

Н и н а . Эпĕ-и? Эпĕ çитсă илĕттĕм. Пĕр тăрăх çитсă.

К ĕ р к у р и . Мĕн тăвасшăн ун чухлĕ çитсăпа?

Н и н а . Кĕпе çĕлĕттĕм. Саппун. Тата пĕр вунă явлăк илĕттĕм.

К ĕ р к у р и . Магазин уçас тетĕн-им?

Н и н а . Çук, хам валли мар. Пĕрне Анаткасри Кулине акин Пăлакине парăттăм. Вăл шкула саплăклă кĕпепе çӳрет. Теприне Кулюçа, унтан Марука. Марукăн саппунĕ çук, явлăкĕ те çурăк.

К ĕ р к у р и . Аван шухăш. Плаки пеккисене пулăшас пулать. Ашшĕ вăрçăра вилнĕ, амăшĕ чирлĕ, ĕçлеймест. Анчах фронтовиксен ачисем апат çитереççĕ тет. Юрăхлă çурт çук пирки çеç ĕç чарăнса тăрать терĕ Кузьма Петрович. Çуртне уçма Шупашкартан укçа та янă тет.

Х а р и т о н . Кала-ха, Кĕркури: пулемет хаклă-и?

К ĕ р к у р и . Пĕлместĕп, тусăм.

Х а р и т о н . Пулемет илесчĕ.

К ĕ р к у р и . Мĕн тума?

Х а р и т о н . Фашистсене пеме.

К ĕ р к у р и . Фронта каяс теместĕн пулĕ те?

Х а р и т о н . Çук, кунта килсен пеме. Вĕсем Атăл хĕрне çитнĕ теççĕ вĕт.

К ĕ р к у р и . Ну?

Х а р и т о н . Атăл пирĕн ялтан та инçе мар.

К ĕ р к у р и . Атăл вăл, тусăм, кунта çеç мар, ку пĕрре. Иккĕмĕшĕнчен, Атăл хĕрне çитни ниме те пĕлтермест. Наполеон çинчен илтнĕ-и?

Х а р и т о н . Илтмен.

К ĕ р к у р и . То-тă. Истори вĕренсен пĕлĕн ак. Вăл Мускава кĕрсе кайнă пулнă, анчах Кутузов ăна Роççийă мĕнлине лайăх кăтартнă: Наполеон каялла çарне çухата-çухата тарнă.

Х а р и т о н . Кам вăл Кутузов?

К ĕ р к у р и . Фельдмаршал! Суворов пекки, чаплă полководец. Чимĕр, юлташсем... *(Итлет.)* Андрей килет пулас. *(Хăвăрт сĕтел çинчен хаçатне илет те хутлатса сумкине чикет.)* Акă мĕн: укçа выляса илни çинчен ан шарлăр. Илтрĕн-и, Харитон?

Х а р и т о н . Илтрĕм.

А н д р е й п е М и ш а кĕреççĕ.

М и ш а . Акă вăл ăçта ларать. Гриша, пухăва мĕншĕн пымарăн?

К ĕ р к у р и . Почтăна çырусем илме кайрам. Миша, Пĕлетĕп. Анчах эпĕ пухăва кайнă чух эсĕ каялла таврăнаттăн.

К ĕ р к у р и . Çырусене кам валеçмелле?

М и ш а . Ку ӗҫе пуху хыҫҫӑн та тума пулатчӗ. Иртнӗ пухӑва та пымарӑн. Капла юрамасть. Андрей, ҫитес пухура сӳтсе явас та Гришӑна выговор парас.

А н д р е й . Выговор пама кирлӗ мар пулӗ, Миша... Кӗркури усӑллӑ ӗҫ тӑвать.

М и ш а . Тӗрӗс. *(Витре патне пырса.)* Нина, ӑҫта сан леш шыв ӗҫмелли?

Н и н а . Курка-и?

М и ш а . Аха, куркка.

Н и н а *(кулса).* Куркка мар, курка. *(Мишӑна курка парать.)*

М и ш а . Курка, курка. *(Шыв ӗҫет.)* Ҫапла, Гриша, пухусене ҫӳрес пулать. Мӗнле, мана ҫыру ҫук-и?

К ӗ р к у р и *(пусӑрӑнчӑклӑн).* Ҫук.

М и ш а *(Кӗркури ҫумне ларса).* Эс ан ҫиллен, Гриша, хӑвах пӗлетӗн: дисциплина. Эс - активист.

А н д р е й *(сӗтел ҫинчи кӗнекесене пухса).* Кӗнекесене кам кӑларса хунӑ?

К ӗ р к у р и . Вӑл ман ӗҫ те-ха.

М и ш а . Вечерта мӗн вуласа парасшӑн-ха эс, Гриша? Уяв ҫывхарать вӗт, мӗнле сӑвӑ та пулин хатӗрлетӗн-и? *(Кӗркури чӗнмест.)* Мӗнле сӑвӑ вулаттӑн-ха эс? "Вурман шавлать, вурман кашлать"...

Н и н а . "Вурман" мар, "вӑрман"...

М и ш а . Вӑрман, вӑрман... Мӗнле пуҫланатчӗ-ха вӑл?

Н и н а . Шавлать, кашлать сӗм вӑрман, Вӗҫӗ-хӗрри курӑнмасть!..

М и ш а . Андрюша, мана алгебра пар та, эпӗ каям.

К ӗ р к у р и . Хаҫатсене хӑвах илсе каятӑн-и, Миша?

М и ш а . Вулав ҫуртне илсе пыр. *(Блокнот кӑларса пахать.)* Паян сан хаҫат вуласа памалла. Колхозниксем апат тусан пухӑнаҫҫӗ пулӗ. Анчах вот что, Гриша, кӑшт ерипентерех вула. Васкаса вуласан пурте ӑнланса илеймеҫҫӗ.

К ӗ р к у р и . Юрать.

М и ш а . Эс вулав ҫуртне пыратӑн-и, Андрюша?

А н д р е й . Пыраймастӑп пулӗ. Уроксене хатӗрлесен Харитона кӑҫатӑ тӗплесе парас тетӗп. Хӗл ҫывхарать.

М и ш а . Кирлӗ, кирлӗ Харитона кӑҫатӑ. *(Стена ҫинчи сӑна курса.)* Ку

Анна Григорьевна мар-и вара?

Х а р и т о н . Анне сăнĕ.

М и ш а . Портрет айне мĕн çырнă, вуласа пар-ха, Харитон.

Х а р и т о н . Эпир "ăй" саспалли таран çеç вĕреннĕ-ха.

М и ш а . Шел, Анна Григорьевна портретне вулав çуртĕнчи стена хаçатне те кĕртесчĕ. Статья та çырас пулать ун бригади çинчен. Ну, ыранччен, юлташсем! *(Каять.)*

К ĕ р к у р и . Ну-й, строгай та пирĕн секретарь! Кăмăлĕ хăйĕн çапах та çемçе. Ятлать те, çилленес килмест.

Х а р и т о н . Кĕркури, лешин çинчен калас-и пиччене?

К ĕ р к у р и . Шăп! Андрей, каласамччĕ, тархасшăн: укçа пулсан эсĕ мĕн илĕттĕн?

А н д р е й *(кĕнекине илсе,сĕтел хушшине ларать).* Мĕнле укçа?

К ĕ р к у р и . Калăпăр, кĕтмен çĕртен сан кĕсйӳнте темĕн чухлĕ укçа.

А н д р е й *(кирлĕ страницăна шыраса).* Укçа пулсан мĕн илмеллине пĕлĕттĕмĕр те, укçи çук.

Х а р и т о н . Пичче...

К ĕ р к у р и *(пӳлсе).* Харитон!

А н д р е й . Чим, эсĕ мĕн тăп тăнă çĕртех укçа çинчен палкама тытăнтăн?

К ĕ р к у р и . Вăл урăх ыйту. Харитон, ак, велосипед, радиоприемник, патефон, баян илесшĕн...

А н д р е й . Харитон, эсĕ урокна хатĕрлерĕн-и? Мĕн вĕренмеллеччĕ-ха сан?

Х а р и т о н . Автан тус.

А н д р е й . Вуласа пар-ха.

Х а р и т о н . Автан тус... автан тус...

К ĕ р к у р и . Пăрах-ха хăвăн "автан тусна". Андрей, мĕн илĕттĕн эс пилĕк пин пулсан?

А н д р е й . Пилĕк пин?

Х а р и т о н . Вунă пин пулсан?

К ĕ р к у р и . Харитон!

Х а р и т о н . Шарламастăп.

К ĕ р к у р и . Ну?

А н д р е й . Эпĕ-и? Нимĕн те илмĕттĕм. Пурне те перекет кассине хывăттăм. Вăрçă пĕтсен пӳрте витме тимĕр илĕттĕм. Атте те шухăшлатчĕ те, анчах вăрçă кансĕрлерĕ.

Х а р и т о н . Пичче.. *(Кĕркури çине пăхать те чарăнать.)*

К ĕ р к у р и . Халĕ калама юрать.

Х а р и т о н . Пирĕн облигаци 25 пин выляса илнĕ.

А н д р е й . Суятăн пуль?

К ĕ р к у р и *(хаçатне кăларса).* Ме, тĕрĕсле. *(Андрей тĕрĕслеме пуçлать.)*

А н д р е й . Çĕр çирĕм пин те...

Н и н а *(итлесе).* Урамра шавлаççĕ. Аннесем килчĕç пулĕ.

А н д р е й . Анне килет-им?

Н и н а . Кузьма пиччепе Ира аки больницăна кайнă терĕ Наçтук аки. Сывалнă пулсан лартса килеççĕ терĕ.

Х а р и т о н . Ну, аннене савăнтаратпăр ĕнтĕ!

Н и н а . Шăп апат пиçнĕ çĕре çитрĕ анне. Пуçтарăр кĕнекесене. *(Сĕтелтен кашăксем кăларса хурать те чашăк-тирĕк патне каять.)*

Х а р и т о н . Анчах укçа выляса илни çинчен эпĕ калатăп, юрать-и, пичче?

А н д р е й *(кĕнекесене сĕтел çинчен пуçтарса).* Юрать, юрать...

Х а р и т о н *(виçĕ кашăк илсе ташă кĕвви шаккама тытăнать, юрлать.)* Велосипед ман пулать, ман пулать, ман пулать, ман пулать...

И р а кĕрет.

Н и н а . Таврăнтăр-и, Ира аки?

И р а Таврăнтăмăр, Нина.

А н д р е й . Анне мĕнле? Сирĕнпе килчĕ-и?

Н и н а *(сĕтелтен çăкăрпа çĕçĕ кăларса хурать).* Пичче, эсĕ çăкăр кас-ха.

И р а . Ачасем... *(Сăмахĕсене калаймасть, пукан çине тĕшĕрĕлсе анать те макăрса ярать.)*

Н и н а *(Ира патне пырса).* Мĕн пулчĕ, Ира аки? Мĕншĕн макăратăн?

Ира *(Нинăна ыталаса).* Андрей... Çук, чĕлхе çаврăнмасть...

Кузьма Петрович кĕрет.

Ира. Кузьма Петрович, эпĕ калаймастăп.

Кузьма Петрович *(чарăна-чарăна).* Андрей, Нина... Сире пĕр хыпар калас тетĕп... Анчах эсир, тархасшăн... хурлăхлă хыпар та...

Нина. Мĕнле хыпар, Кузьма пичче?

Кузьма Петрович. Сирĕн аннӳ... Анна Григорьевна... вилнĕ.

Чаршав.

Кузьма Петрович. Кăна тĕрĕс калатăн-ха эс. Атăл хули тăшманшăн çăва пулатех. Эп урăххи çинчен... Головатăй ĕçĕ мĕнле сарăлать*

Çитăр мучи. Головатăй-и? Пысăк ĕç тунă, мухтава тивĕçлĕ ĕç...

Кузьма Петрович. Çавă çав. Пирĕн республикăри колхозниксем те унтан юласшăн мар. Пăрачкав колхозникĕ, ав, самолет илме çĕр пин панă.

Çитăр мучи. Чăнах-и? Камран илтрĕн?

Кузьма Петрович. Халĕ çеç радиопа кларĕç-иç.

Çитăр мучи. Ман хăлха хытăрах та, илтмерĕм пулĕ.

Кузьма Петрович. Ширманова тата хăй ывăлĕ валли танк илме аллă пин панă...

Андрей. Танк аллă пин тăрать-и, Кузьма пичче?

Кузьма Петрович. Танксем вĕсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Хакĕ те тĕрлĕ.

Харитон кĕрет. Вăл тин çеç тăнă курăнать. Куçĕсене чăмăрĕсемпе йăвалать.

Харитон *(Андрей патне пырса).* Пичче, укçа пар-ха.

Андрей. Пекĕ илме-и?

Харито н. Аха.

Андрей. Кăларса парах эс пуçунтан вăл шухăша! Манăн пекĕ илме укçа çук.

Харитон. 25 пин ăçта?

Андрей. Перекет кассинче. Хам алăра пулсан та вăл укçана салатма

юрамасть.

Х а р и т о н . Мĕншĕн?

А н д р е й . "Мĕншĕн, мĕншĕн"... Çамрăк-ха пурне те пĕлме... *(Хăвăрт тухса каять.)*

Х а р и т о н . Çитăр мучи, кала-ха пиччене, пекĕ илме укçа патăр.

Ç и т ă р мучи. Пултараймастăп, ачам. Пиччӳ - кил хуçи, хăй пĕлнĕ пек тăвать...

Ç и т ă р мучи. Мĕншĕн эсир пурте ир тăнă? Паян вырсарникун. Тăраничченех çывăрмаллаччĕ.

Н и н а *(урайне шăлма пуçласа).* Паян пирĕн воскресник, Çитăр мучи. Салтак арăмĕсем валли вутă турттарса килетпĕр.

Ç и т ă р мучи. Э, çапла терĕç-çке... Аçу çырать-и?

Н и н а . Ĕнер çеç çыру илтĕмĕр.

Ç и т ă р мучи. Мĕнле, сывалать-и?

Н и н а . Ура çине тăра пуçларăм тет.

Ç и т ă р мучи. И, апла утнаккăланать эппин. Хăвăр çырнă чух манран салам калăр. Çитăр мучи хĕрӳллĕ салам ярать тесе çырăр.

Н и н а . Çырăпăр, Çитăр мучи.

Ç и т ă р мучи. Хăй танкне çăлас тесех суранланнă темерĕç-и?

Н и н а . Танкĕ питĕ лайăхчĕ тет. Пирĕн пӳрт пысăкăшчĕ тет.

Ç и т ă р мучи. Ну, эпĕ каям-ха эппин... *(Кайма тытăнать те каялла çаврăнать.)* Нина, эс кăшт тăрсан ампара пыр-ха, кĕрпе парса ярăп. Хутаç илсе пыр.

Н и н а . Кĕрпе кирлĕ мар, Çитăр мучи. Халĕ столовăйра апатланатпăр.

Ç и т ă р мучи. Кĕрпи кансĕрлемĕ-ха вăл, пырса ил. Хутран-ситрен пăтă пĕçерсе çийĕр. Пăтă пĕçерме пĕлетĕн-и?

К у з ь м а П е т р о в и ч . Пăтă мар, çăкăр пĕçерме вĕренчĕ Нина.

Ç и т ă р мучи. Ну? Маттур, маттур...

Х а р и т о н кĕрет. Вăл çĕнĕ хулăн пиншакпа.

М и ш а . Э, Харитон Клементьевич! Мĕншĕн эс пит салхуллă паян?

Х а р и т о н  *(Андрей патне пырса).* Пичче...

А н д р е й .  Мĕн калас тетĕн, шăллăм?

Х а р и т о н .  Магазина пекĕсем илсе килнĕ, пĕр вĕçĕнче икĕ çĕçĕ, тепĕр вĕçĕнче - пăра, варринче штопор.

А н д р е й .  Куртăм, аван пекĕсем пур. Анчах ман укçа çук.

М и ш а  *(Харитона пекĕ парса).* Ме, тыт, Харитон Клементьевич, пекĕ.

Х а р и т о н .  Ой! Мĕнле пекĕ! Ку магазинринчен те хÿхĕм...

М и ш а .  "Дарю" мĕнле-ха чăвашла?

К ĕ р к у р и .  Парнелетĕп...

М и ш а .  Эп сана парнелетĕп, Харитон.

Х а р и т о н .  Мана парнелетĕн-и?

М и ш а . Сана, Харитон тусăм. Анчах ан çухат... Ку Ленинград пеки...

Х а р и т о н .  Тавтапуç, Миша! *(Андрее.)* Куратăн-и? Эсĕ 25 пин пулсан та илсе параймастăн... Аппа! Аппа! *(Нина кĕрет.)* Куратăн-и, мĕнле пекĕ? Миша парнелерĕ.

Н и н а .  Эсĕ каллех çĕнĕ пиншакна тăханнă мар-и? *(Харитон çинчи пиншакне хывса илет).* Тăхăн киввине! Малашне çунапа ярăнма кайнă чух кивĕ кĕрĕкне тăханнă пултăр. Илтрĕн-и?

М и ш а .  Ой-ой! Пит хытă тыткалаканскер сан аппу, Харитон Клементьевич.

К у з ь м а  П е т р о в и ч .  Акă мĕн, ачамăрсем: сирĕн тантăшсем воскреснике пухăнаççĕ. Кÿлĕр те вăкăрсене пуçлăр тимĕр пухма.

К ĕ р к у р и .  Ак ку - идейă!

Ç и т ă р  мучи.  Пуçтарнă май самолет çинчен калаçкаласа илĕр.

М и ш а .  Мĕнле самолет çинчен?

К у з ь м а  П е т р о в и ч .  Бомбардировщик илсе парас тетпĕр Хĕрлĕ Çар валли. Каçхине пуху пухас.

К ĕ р к у р и .  Есть! Халех шкулта митинг тăватпăр.

Ç и т ă р  мучи. Эх, асра та çук. Эп карчăкпа калаçрăм, Кузьма Петрович. Пилĕк

пин парас тет. Сахалтărах терĕм те... Укçи ун аллинче-çке. Укçи пур хăйĕн. Кăшт хытăрах вĕт ман карчăк. Ничево. Пухура кам та пулин ытларах парсан хушать пулĕ те-ха. Хыттине хытă та ман карчăк, çынран юлма юратмасть хай.

К у з ь м а  П е т р о в и ч . Эпир Наçтукпа çирĕммĕшне паратпăр пулĕ.

Ç и т ă р мучи. Ну, апла пулсан ман карчăк вунă пинрен кая памасть.

К у з ь м а  П е т р о в и ч . Малтан фронтри ĕççем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен каласа парасчĕ колхозниксене.

Ç и т ă р мучи. Миша доклад туса парĕ. Чăвашла сăмахлама вĕренчĕ ĕнтĕ. Пĕркун салтак арăмĕсен пухăвĕнче доклад туса паче. Хĕрарăмсем пит ырларĕç.

К у з ь м а  П е т р о в и ч . Ачи ăслă-ха вăл...

Ира кĕрет. Иккĕшĕ те каяççĕ. Нина кĕрет.

Н и н а . Ира аки... Ман пĕр ыйту пур та... Те ерçетĕн ĕнтĕ эс?

И р а . Мĕнле ыйту, Нина?

Н и н а . Атте патне çыру çырмалла, çырса памăн-ши?

И р а . Хăвăр мĕншĕн çырмастăр?

Н и н а . Хамăр та çыратпăр. Эпир пĕрмай виççĕмĕр çыраттăмăр ун патне: анне, пичче, эпĕ... Анне вилсен пиччепе çеç çырма пуçларăмăр.

И р а . Иксĕр çырни çитмест-им?

Н и н а . Çитмест çав. Аттерен виçĕ çыру илтĕмĕр. Кашнинче мĕншĕн аннӳ çырма пăрахрĕ тесе çырать.

И р а . Аннӳ çинчен çырман-им эсир?

Н и н а . Пичче атте кăмăлне хуçас мар терĕ.

И р а . Халĕ пĕлтерес тетĕр-им?

Н и н а . Çук, анне ырăнне сана çыртарас терĕмĕр. Эс анне пекех çыратăн. Эпĕ танлаштарса пăхрăм. "Ç" саспалли çеç сан урăхларах тухать; эсĕ "ç" хӳрине кукăртмастăн.

И р а . Ку улталани пулать вĕт.

Н и н а . Анне çинчен пĕлсен атте хурланма пуçлĕ, пирĕн çинчен шухăшлама тытăнĕ... Ун халĕ фашистсене нумайтăрах пĕтересси çинчен шухăшламалла.

Пичче те çапла калать.

И р а *(Нинăна ыталаса).* Нина...

Н и н а . Чим, эс мĕншĕн макăратăн?

И р а *(куçне шăлса).* Çук, макăрмастăп-çке... темскер... Сахал çывăрнă та кĕçĕр...

Н и н а . Пуçла, Ира аппа... Анчах "ç" хÿрине ак çапла кукăрт. *(Çырса кăтартать.)* Савнă упăшкам Клементий Капитонович. Анне кашни çыруне çапла пуçлатчĕ... Пĕтĕм çемьепе сана хĕрÿллĕ салам яратпăр... Эпир халĕ пурте сывă... Чипер пурăнатпăр... *(Тытăнса тăрать, макăрас патнех çитет.)* Кунсерен - ир те, каç та - сана асăнатпăр... *(Питне хупласа сассăр макăрать.)*

И р а . Нина... чунăм... *(Нинăна ыталать.)*

Сцена хыçĕнче ачасен юрри çывхарать. Хаваслă юра, вăрçа вăхăтĕнче çырнă юра.

И р а *(чÿречерен пăхса.)* Нина! Куратăн-и, ачасем тимĕр турттарса килеççĕ...

Н и н а *(чÿрече патне пырса).* Ой, миçе çунашка!

Юрă вăйланнăçемĕн вăйланать.

И р а . Харитон хура вăкăрпа пырать.

Н и н а . Мĕн чухлĕ тимĕр тиенĕ! *(Чÿречене шаккаса.)* Харитон! Харитон!

Çитăр мучи шыв ĕçет.

Х а р и т о н *(пĕчĕк хут таткине илсе вулать).* "За-щит-ни-кам Родины!" "От пи-о-не-ров..."

А н а с т а с и я Зах. *(кĕрет).* Кĕнчеле арлас тесе килтĕм те, ман валли вырăн та çук. Хĕрсем йĕркипе ларса тухнă.

Ç и т ă р мучи. Салтаксем валли çыхаççĕ, Наçтук кин.

А н а с т а с и я Зах. Эпĕ те вĕсем валли арлатăп та-ха...

Х а р и т о н *(пукан парса).* Ак кунта лар, Наçтук аки... Çитăр мучи юмах ярса парĕ.

А н д р е й п е К ĕ р к у р и кĕреççĕ.

А н а с т а с и я Зах. Эсир ку таранчченех вутӑ татмарӑр пулӗ те?

А н д р е й *(хывӑнса).* Уйӑх сути кӗҫӗр кӑнтӑрлахи пек.

К ӗ р к у р и . Эпир кӗҫӗр Матрӳне аппасене, Варвари инкене татса патӑмӑр. Караҫпа Ваҫлейсем патне каясшӑнччӗ те, Андрей хырӑм выҫрӗ терӗ.

А н а с т а с и я Зах. Маттур, маттур...

А н д р е й . Нина, сан ҫыртмалли мӗн те пулин пур-и? Кӗркурин хырӑм выҫнӑ тет ав.

Н и н а *(кӑмакаран сӗтел ҫине паранкӑ кӑларса лартать).* Ак ҫийӗр. Эпир Харитонпа паҫӑрах апатлантӑмӑр.

А н д р е й . Ну, Григорий Тарасович, пиншакна хыв та - сӗтел хушшине! *(Ҫӑкӑр касать.)*

К ӗ р к у р и . Эп ахаль ҫеҫ каларӑм, май ҫиес килмест.

А н д р е й . Ну, ну, мӗн турткаланса тӑратӑн тата.

Н и н а . Ларса ҫи ӗнтӗ.

К ӗ р к у р и *(пиншакне хывса).* Эс пӗҫернӗ шарккӑва сума суса астивсе пӑхам эппин... *(Ларать.)* Эс, Нина, пищпром ӗҫне лайӑх вӗрентӗн курӑнать... *(Ҫиет.)*

А н д р е й . "Пищпром" мар, "кулинари".

Нина алса ҫыхма пуҫлать. И р ӑ п а Миша кӗреҫҫӗ. Миша туллатнӑ тӑлӑп тӑхӑннӑ.

А н а с т а с и я Зах. Чим, эсир ӑҫта кайма пуҫтарӑннӑ? Тӑлӑп тӑхӑннӑ.

М и ш а *(тӑлӑпне хывса).* Степан Матвеич паче.

И р а . Матрӳне аки фронта яма чӑлха парас тенӗччӗ. Пӳртне кӗнӗ-кӗменех Ҫтапан мучи: "Карчӑк, илсе кӗр-ха чӑлантан туллатнӑ тӑлӑпа, - терӗ. - Эпӗ хам салтакра хурал тӑнӑ чух нумай шӑннӑ. Парса ярас тӑлӑпа фронта, тӑхӑнччӑр салтаксем..." — терӗ. Эпир илесшӗн марччӗ, хӑвна кирлӗ пулӗ тетпӗр. "Эпир кунта ӑшӑ пӳртре, пирӗн ывӑлсем окопсенче", -терӗ Ҫтапан мучи тӑлӑпне Мишӑна тыттарса. *(Нина пашне пырса.)* Ҫыхса пӗтертӗн-и?

Н и н а . Пӗтрӗ, Ира аки. *(Парать.)*

И р а . Ай, хӳхӗм пулнӑ. Ҫӑмӗ те пит ҫемҫе тата. Салтак савӑнать ӗнтӗ сан

алсуна тăхăнсан. Çыруне çыртăн-и?

Н и н а . Çыртăм. *(Вулать.)* "Савнă пиччем! Пичче тенĕшĕн ан çилленсем: эсир маншăн пурте пичче, пурте тăван. Çак алсана çыхнă чух сан сану ялан куçăм умĕнче тăчĕ... Палламасть тетĕн пулĕ. Паллатăп, ятна çеç пĕлместĕп... Çавăнпа ман çырăва илсен хăвăн ятна, хушаматна пĕлтерсе çыру яр вара. Юрать-и? Хăвăн паттăр ĕçӳсем çинчен çыр. Хĕрӳллĕ салам сана, пичче... Нина Козлова... Ман адрес..."

Çитăр мучи кайма тесе алăка уçать те, диктор сасси илтĕнет.

А р ç ы н  д и к т о р . Республикăри çынсем фронт валли ăшă тумсем пухаççĕ.

Ç и т ă р  мучи *(чарăнса)*. Çĕнĕ хыпарсем пĕлтереççĕ пулас?

А н а с т а с и я  Зах. Ан шарла-ха, Çитăр Анисимыч, итлер.

Ç и т ă р  мучи. Итлес, ара, итлес... *(Пукан çине ларать.)*

Х ĕ р а р ă м  д и к т о р . "Колхозник Чувашии" колхозра танк колонии валли укçа-тенкĕ пухас ĕç кунсерен сарăлса пырать. Паянхи куна хĕрĕх миллион тенкĕ пухнă та ĕнтĕ...

А р ç ы н  д и к т о р . Хăш-пĕр колхозниксем тата уйрăм самолет илме укçа пуçтараççĕ. Паян "Ялав" колхозăн председателĕ Петров юлташ Райбанк конторине самолет илме çĕр çирĕм пин тенкĕ укçа хыврĕ... Колхоз председателĕпе унăн арăмĕ Анастасия Захаровна çирĕм пин панă, колхоз завхозе çитмĕл çулхи старик Çитăр Анисимычпа...

Ç и т ă р  мучи. Кăшт суйнă та ĕнтĕ... Эпĕ утмăл саккăрта çеç-ха

А н а с т а с и я  Зах. Ан кансĕрле-ха, тархасшăн.

Ç и т ă р  мучи. Чимĕр-ха, чимĕр... Ман ята çеç асăнчĕç мар-и? Карчăк ятне те çыртартăм-иç укçа панă чух...

А н а с т а с и я  Зах. Итлеме памарĕ вĕт: Çитăр Анисимычпа унăн карчăкĕ Пелагея Трофимовна 15 пин панă терĕç.

Ç и т ă р  мучи. Пелагея Трофимовна тесех каларĕç-и?

К ĕ р к у р и . Çаплах каларĕç, Çитăр мучи.

Х ĕ р а р ă м  д и к т о р . Çакăнпа каçхи передачăсене вĕçлетпĕр. Ыран ирхине вырăнти вăхăтпа...

А н а с т а с и я  Зах. Итлеме памарĕ вĕт Çитăр Анисимыч.

Ç и т ă р мучи. Мĕн тетĕн, Наçтук кин?

А н а с т а с и я  Зах. Итлеме памарăн тетĕп...

Ç и т ă р мучи. Ара, карчăк хĕпĕрттет ĕнтĕ. Кайса савăнтарам-ха эппин. *(Хăвăрт каять.)*

Нина сасартăк сасăпа йĕрсе ярать.

И р а *(ун пашне пырса).* Нина, сана мĕн пулчĕ?

Н и н а . Намăс, намăс... Хăшĕ-пĕрисем юлашки укçине пачĕç, эпир... Эсĕ, эсĕ айăплă, пичче!

И р а . Мĕншĕн айăплатăн пиччӳне, Нина?

Н и н а . Çынсен ячĕсене радиопа асăнаççĕ...

А н д р е й . Э, самолет илме паманшăн пулĕ-ха... Кунсерен ятлать мана: "Хыт кукар, чунсăр!" - тесе пĕтерет.

Н и н а . Хыт кукар пулмасăр! 25 пин укçине арчана чиксе хунă та... Миçе хут " хăть виçĕ пин парар" терĕмĕр Харитонпа. Кашниншĕн пиншер тенкĕ панă пулсан та намăс марччĕ... Анаткасри Кĕтерни аки паранкă сутса та пулин хай ячĕпе пин тенкĕ, хĕрĕ ячĕпе тепĕр пин паче.

А н а с т а с и я  Зах. Аçу хушмасăр тăкаклама юрамасть терĕ пулĕ.

Н и н а . Атте пĕркунах, анне вилнине систернĕ хыççăн, укçине хăвăр пĕлнĕ пек расхутлăр тесе çырчĕ. Харитон велосипед илесшĕнччĕ. Ăна та: "Велосипед кирлĕ мар, вăрçă чарăнсан илĕпĕр", - терĕ... Халь урама тухма та намăс ĕнтĕ. *(Андрей çине пăхса.)* Мĕн чĕнместĕн? Намăссăр!

А н д р е й . Нина...

Н и н а *(пӳ'лсе).* Хуп çăварна! Кулать тата...

К у з ь м а  П е т р о в и ч  кĕрет. Тăлăп тăхăннă.

К ĕ р к у р и . Пĕр енчен, эсĕ, Нина, тĕрĕс калатăн: 25 пинрен виççĕшне пама пулатчĕ... Ун пирки эпĕ те каласа пăхрăм Андрее. Шарламарĕ... Тепĕр енчен...

Н и н а . Нимĕнле тепĕр енĕ те çук.

К у з ь м а  П е т р о в и ч  кĕрет. Тăлăп тăхăннă.

К у з ь м а  П е т р о в и ч *(Андрей пашне пырса ыталаса илет).* Андрей, çамрăк тусăм! Эх, ÿсеççĕ вĕт маттурсем пирĕн çĕршывра! Çитĕнсен мĕнле çынсем пулăр! Каçар мана, ват супнăскере, эп сан çинчен урăхларах шухăшланăччĕ. Наçтук! Савнă карчăкăм! Ытала Андрее!

А н а с т а с и я  Зах. Чим, эс укçа хывма каймарăн-и?

К у з ь м а  П е т р о в и ч . Тĕрĕс, карчăк... Анчах пуçанасем патне кĕреймерĕм. Каçар. Киле васкарăм.

А н а с т а с и я  Зах. Апла... ăçта ĕçрĕн тата?

К у з ь м а  П е т р о в и ч . Ĕçмен, карчăк... Эрехсĕрех ÿсĕрĕлтĕм... *(Кĕсйинчен хут кăларса).* Ак çакă чуна хумхантарчĕ... Ме, вула, Андрей! *(Андрей илет те вуласа пăхать, анчах нимĕн те калаймасть, куççулĕсене шăлать).*

К ĕ р к у р и . Чим, эсĕ макăратăн мар-и?

А н д р е й . Макăрмастăп, тусăм... Эх, ме, вула...

К ĕ р к у р и *(хутне илсе вулать).* Андрюша! Савнă тусăм! *(Ыталать.)* Каçар мана... Эпĕ те сан çинчен кăшт урăхларах шÿхăшланă.

Н и н а *(хутне Кĕркурирен илсе вулама тытăнать).* "Чувашская АССР..."

К у з ь м а  П е т р о в и ч . Чим-ха, Нина... *(Алăк патне пырса алăка яр уçать.)* Хĕрсем, итлĕр! Вула, Нина... Хытăрах вула!

Алăк патĕнче хĕрсем кĕпĕрленсе тăраççĕ.

Н и н а . "Чувашская АССР... "Ялав" колхоз... Андрей Козлов комсомолеца... Нина Козлова пионеркăна тата вĕсен шăллĕне Харитон Козлова... Хĕрлĕ Çара пулăшнăшăн сире, çамрăк юлташсем, тав!.. Эсир панă укçапа сирĕн аçу Клементий танкист валли чи пысăк танк илсе парăпăр... Çитеймен укçине государства хушса парĕ. Вĕренÿпе обществăлла ĕçсенче пултарулăх сунатпăр... Оборона Комитечĕ".

Пауза.

К ĕ р к у р и . Андрюшăна - ура!

Ачасем Андрее çĕклесе, "ура" кăшкăрса çÿлелле ывăтаççĕ. Çав вăхăтра Миша пукан çине хăпарать.

М и ш а .  Юлташсем! Козловсене янӑ телеграммӑра пысӑк танк илме ҫитеймен укҫине государства хушса парӗ тенӗ. Ман шутпа, государства мар, эпир хушса парар. Пирӗн шкулта миҫе ача... Кашни ҫӗршер тенкӗ парсан та... Укҫа ҫуккисем сахалтӑрах та пама пултараҫҫӗ... Пирӗн ҫума ытти шкулсем хутшӑнӗҫ.

К ӗ р к у р и .  Тӗрӗс, Миша! Эпӗ пилӗк ҫӗр тенкӗ паратӑп. *(Пурте алӑ ҫупса яраҫҫӗ. "Эпӗ ик ҫӗр", "эпӗ виҫ ҫӗр", "эпӗ пилӗк ҫӗр паратӑп" тенӗ сасӑсем илтӗнеҫҫӗ.)*

М и ш а .  Ира, пуҫла ҫырма.

Ира сӗтел хушшине ларса ҫырма тытанать, ачасем ӑна хупӑрласа илеҫҫӗ. Юнашар пӳлӗмри хӗрсем те сӗтел патне пыраҫҫӗ.

Чаршав

*Максимов-Кошкинский, И. Ачамӑрсем : виҫӗ пайлӑ пьеса / И. Максимов-Кошкинский // Чӑваш сӑмахлӑхӗ : 10-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 446-463.*